РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОЛИМПИАДНЫЙ ЦЕНТР 2025 ВСОШ РОШ МУНИЦИПАЛЬНЫЙ ЭТАП РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОЛИМПИАДН

# ЭКЗЕМПЛЯР № 4

***Задания** для муниципального этапа республиканской предметной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе.*
*2025/2026 учебный год. 7 класс*

*Время проведения – 150 минут*
*Максимальный балл – 50*

Текста вулăр та ĕçсене тăвăр.

*(1)Мĕн-ши этемшĕн чи пысăк инкек?(2)Мĕн уншăн чи япăххи? (3)Алă çукки. (4)Алăсăр пуртă та тытаймăн, ача та çĕклеймĕн.*

*(5)Унтан начарри мĕн?(6)Урасăр пулни. (7)Урасăр çул якине те пĕлеймĕн, сăрт çӳллĕшне те виçеймĕн.*

*(8)Тата япăхраххи те пур-ши çыншăн?(9)Хăлхасăр юлни, илтейми пулни. (10)Ĕçре савапа çава пĕр саслă пулнине те асăрхаймастăн.*

*(11)Кунтан та начар пулма пултарать-ши? (12)Куçсăр юлни, курми пулни. (13)Хăпартупа хĕвел пĕр тĕслине те пĕлейместĕн, çимĕç симĕсне те манатăн. (14)Уйăх катăкĕпе пĕлĕт кăтри те ĕмĕрлĕхех сӳнеççĕ.*

*(15)Кунран пысăкрах инкек те пур-ши тата?(16)Ăсран тайăлни – акă мĕн инкек. (17)Çын утать те çитеймест. (18)Илтет те – ăнланмасть. (19)Курать те – палламасть.*

*(20)Ăсран тайăлнинчен хăрушши çук-тăр?(21)Пур çав. Юлхавлăх. (22)Мĕншĕн наяна алă? (23)Мĕншĕн ӳркенчĕке ура? (24)Кахала ăс-тăн – мĕн тума?*

*(25)Акă мĕн иккен чи пысăк инкек. (26)Юлхав ухмахран начар, тăмсайран япăх.*

1. Текста ят парăр, авторне палăртăр.
2. Текстран синоним речĕсене çырса илĕр.
3. Текстран этем кĕлеткин пайĕн ячĕсене çырса илĕр. Çав сăмахсем тĕл пулакан ваттисен сăмахне аса илсе çырăр.
4. Текстра апат-çимĕç ячĕ тупăр, сăмахăн пĕлтерĕшне тата пулăвне ăнлантарăр.
5. Текстра ĕç хатĕрĕн ячĕсене тупăр, вырăсла куçарăр.
6. Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр.
*Çăла ан сур* **–** *....*
*Темле пысăк юхан шыв та ....*
*Таса çăлра* **–** *....*
*Ăçта кăна ан çит, ....*
*Уй куçлă, ....*
7. Тупмалли юмахсен тупсăмĕсене тупăр.
*Ури çук, тĕк тăрать.*
*Суха тăвать, утă çимест.*
*Пĕр пичче çулла канать, тепĕр пичче хĕлле канать.*
*Кĕлеткинчен хӳри вăрăм.*
*Куçран пăхса макăртать.*
8. Мĕн вăл сăпатлантару? Тĕслĕх илсе парăр.
9. Çак йĕркесем хăш хайлавран? Хайлав ятне, жанрне çырăр. Авторĕн хушамачĕпе ятне, ашшĕ ятне палăртăр.

*Е сак çинчи кушакĕ*
*Питне çăва пуçласан*
*Апат хатĕр хăнашăн*
*Алли-ури çăмăлран.*

10. Вуланă текстра палăртнă *«Акă мĕн иккен чи пысăк инкек. Юлхав ухмахран начар, тăмсайран япăх»* шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар ăслав хайлавĕ çырăр.



© 2025 Республиканский олимпиадный центр МОиН РТ
Копирование **не допускается**

РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОЛИМПИАДНЫЙ ЦЕНТР 2025 ВСОШ РОШ МУНИЦИПАЛЬНЫЙ ЭТАП РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОЛИМПИАДН



***Задания** для муниципального этапа республиканской предметной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе.*
*2025/2026 учебный год. 8 класс*

*Время проведения – 150 минут*
*Максимальный балл – 50*

Текста вулăр та хушнă ĕçсене тăвăр.

*(1)Кача пÿрне мĕншĕн шăнать? (2)Мĕншĕн тесен вăл пĕчĕк. (3)Пуç пÿрне вара мĕншĕн шăнать? (4)Пысăк пулнăран мар, паллах. (5)Пĕччен пулнăран. (6)Перчетке ăшĕнче кăна мар, алсиш ăшĕнче те пĕччененех вăл. (7)Пĕччен, мĕншĕн тесен вăл ыттисенчен аслă пÿрне.*

*(8)Шăнсан пуç пÿрне – пиччĕшĕ-шăллĕ патне куçать. (9)Ăшăнсан каллех пуç каçăртма пуçлать. (10)Манать хăйне ыр тунине. (11)Пăрăнать хăйне çăлакансенчен.*

*(12)Пилĕк пÿрни ялан пĕрле пулччăр тесен мĕн тумалла-ха? (13)Алла кĕреçе е шăпăр, мăлатук, пуртă е сава тытмалла. (14)Вара шартлама сивĕре те алă тарласа тăрать. (15)Малтанах сылтăмми ăшăнать, унтан сулахаййи те. (16)Ĕçленĕ чух пуç пÿрне те ыттисемпе пĕрлех. (17)Пуç каçăртма вăхăт çук. (18)Пĕр пÿрне вăл – пĕр пÿрнех. (19)Пиллĕкĕшĕ те пĕрле чух – нумаййăн. (20)Вăйлă алă вăл. (21)Анчах хăрах алăпах тĕвĕ те çыхаймастăн. (22)Вунă пÿрне пĕрле – пысăк вăй. (23)Икĕ вăйлă алă. (24)Мăшăр алă нумай ĕç тума пултарать. (25)Пуçра ăс пулсан – пурне те тăваять.*

1. Текстран пÿрне ячĕсене çырса илĕр.
2. Текстра ĕç хатĕрĕн ячĕсене тупăр, вырăсла куçарăр.
3. Чăваш чĕлхинче ыйтуллă предложенисем мĕнле мелсемпе пулаççĕ? Панă текстра ыйтуллă предложенисем мĕнле мелпе пулнă? Тĕслĕх илсе парăр.
4. 1-7-мĕш предложенисенче хăшĕнче чарăну паллине йăнăш лартнă? Предложение чарăну паллине тĕрĕс лартса çырса илĕр, мĕншĕн апла çырмаллине ăнлантарăр.
5. 15-мĕш предложенире подлежащи тупăр, мĕнле пуплев пайĕнчен пулнине, мĕнле формăра тăнине ăнлантарăр.
6. Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр.

*Кĕр мăнтăр, ....*
*Кĕркунне какай, ....*
*Вăрман пек пуянни, ....*
*Упине тытиччен ....*
*Çут çанталăкра кашни вăхăтăн ....*

7. *Тупмалли юмахсен тупсăмĕсене тупăр.*

*Пĕр сăпкара ултă ача.*
*Хĕлле хĕлĕпех ĕçлет, çулла хăяккăн выртать.*
*Икĕ пуç, ултă ура, пĕр хÿре.*
*Икĕ енчĕкре икĕ шăрça, пин тенкĕпе сутмастăп.*
*Кашта тулли шурă чăх.*

8. Мĕн вăл эпиграф?
9. Çак йĕркесем хăш хайлавран? Авторĕн хушамачĕпе ятне çырăр.

*Ача-пăчам пит айван,*
*Хальччен суха тытайман.*
*Кам ачашлĕ ачама?*
*Кам хĕрхенĕ хĕрĕме.*

10. Вуланă текстра палăртнă *«Мăшăр алă нумай ĕç тума пултарать. Пуçра ăс пулсан – пурне те тăваять»* шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар ăслав хайлавĕ çырăр.



© 2025 Республиканский олимпиадный центр МОиН РТ
Копирование **не допускается**

РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОЛИМПИАДНЫЙ ЦЕНТР 2025 ВСОШ РОШ МУНИЦИПАЛЬНЫЙ ЭТАП РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОЛИМПИАДН



**Задания** *для муниципального этапа республиканской предметной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе. 2025/2026 учебный год. 9 класс*

*Время проведения – 180 минут*
*Максимальный балл – 50*

Текста вулăр та хушнă ĕçсене тăвăр.

*(1)Пĕр çын шӳт тума, та суйма юратнă, тет. (2)Пĕррехинче хаяр сасăпа кăшкăрса ячĕ, тет:*

*– Кашкăр! Кашкăр!*

*(3)Акă ун патне кӳршисем чупса та çитеççĕ. (4)Пăхаççĕ – нимĕнле кашкăр та çук. (5)Çынни вара ахăлтатса кулса ларать тет. (6)Пулăшма пынисем ăна ятларĕç-ятларĕç те килĕсене кайрĕç тет.*

*(7)Тепĕр кунхине çак çын:*

*– Пушар тухрĕ! Кӳршĕсем, пулăшăр! – тесе кăшкăрса ячĕ тет.*

*(8)Кӳршĕсенчен хăшĕ-пĕри шаннă-шанманах чупса çитрĕç тет. (9)Кураççĕ: леш каллех ахăлтатса кулса ларать тет. (10)Пушар сӳнтерме пуханнă çынсем витрисемпе пакурĕсене йăтса килĕсене саланачĕç тет.*

*(11)Пĕр тĕттĕм каçхине çак çын çуртне вăрăсем кĕреççĕ тет.*

*(12)– Вăрă! Вăрă! – тесе кашкăрать тет ку пĕтĕм вăйран.*

*(13)Кӳршĕсем килсе пулăшасса шаннă ĕнтĕ çак суеçĕ этем. (14)Анчах кӳршисенчен пĕри те ун патне пымарĕ тет. (15)Вăрăсем çакăнне пĕр япала хăвармасăр çаратса тухса кайрĕç тет.(16)Çийĕнчи кĕпи-йĕмне те хывса илчĕç тет. (17)Ирхине кӳршисем çак суеçĕ макăрса ларнине кураççĕ тет, анчах ăна ĕненмерĕç те, хĕрхенмерĕç те тет.*

*(18)«Çынна улталатăп тесе ан шутла, хăвна улталани анчах пулать», – тесе вĕрентнĕ ваттисем. (19)Ваттисем каланине итлемесен ыррине кураймăн. (20)Пĕрре улталăн, иккĕ улталăн, виççĕмĕшĕнче ларса йĕрĕн.*

1. Текстра «сосед» пĕлтерĕшлĕ сăмах тупса çырăр. Тупнă сăмахăн синонимне пĕлĕр.

2. 1-2-мĕш предложенисене чарăну паллисене тĕрĕс лартса çырса илĕр. Запятойсене мĕншĕн лартнине ăнлантарăр.

3. Текстра обращени(сем) тупăр, мĕнле член пулнине палăртăр.

4. Хушу наклоненийĕн 2-мĕш сăпат форминчи глагола тупса çырăр.

5. Текстран хутлă предложенисем çырса илĕр.

6. Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр.

*Калакан маннă, ....*
*Ĕмĕр сакки ....*
*Ватă çерçие ....*
*Вăрман пуян, ....*
*Юлташсăр çын....*

7. Тупмалли юмахсен тупсăмĕсене пĕлĕр.

*Иккĕн чупаççĕ, иккĕн хăвалаççĕ, пĕрне-пĕри çитеймеççĕ.*
*Сӳс хӳреллĕ хурçă йытă пĕр кĕрет те пĕр тухать.*
*Кайнă чух юрла-юрла, килнĕ чух хăса-хăса.*
*Иккĕн пăхаççĕ, иккĕн итлеççĕ, пĕри калаçать.*
*Çулла сивĕ, хĕлле ăшă.*

8. Мĕн вăл памфлет? Эсир мĕнле памфлет пĕлетĕр? Ятне, авторне çырăр.

9. Çак йĕркесем хăш хайлавран? Авторне палăртăр.

*Çук, нихçан, ĕмĕрте те*
*Ĕненмĕп эп, ывăлăм,*
*Эсĕ çичĕ ютра*
*Ик куçна хупнине.*

*Çырăвне комиссар*
*Йăнăшпа кăна çырнă вăл,*
*Эп пĕлеп вăрçăра*
*Ун пекки пулнине.*

10. Вуланă текстра палăртнă *«Ваттисем каланине итлемесен ыррине кураймăн. Пĕрре улталăн, иккĕ улталăн, виççĕмĕшĕнче ларса йĕрĕн»* шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар ăслав хайлавĕ çырăр.



© 2025 Республиканский олимпиадный центр МОиН РТ
Копирование **не допускается**

РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОЛИМПИАДНЫЙ ЦЕНТР 2025 ВСОШ РОШ МУНИЦИПАЛЬНЫЙ ЭТАП РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОЛИМПИАДН



***Задания** для муниципального этапа республиканской предметной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе.*
*2025/2026 учебный год. 10 класс*

***Время проведения – 180 минут***
***Максимальный балл – 50***

Текста вулăр та хушнă ĕçсене тăвăр.

*(1)Ĕлĕк-авал Чăваш çĕрне инçетри пĕр патшалăхран элчĕсем килнĕ. (2)Чăваш Енпе туслă çыхăну пуçарасшăн пулнă иккен çав çĕр-шыв. (3)Сăлтавĕ мĕнре-ха? (4)Авалхи чăвашсем те, хальхисем пекех, ĕçчен те сăпайлă пулнăран нумайăшĕ вĕсен çĕр-шывĕ еннелле туртăннă. (5)Аслă Атăлĕ, вată юманлăхĕпе хитре çăкалăхĕ, сарă хĕвелĕпе сенкер тӳпи кирек кама та илĕртнĕ.*

*(6)Çепĕç сăмахĕсем, ытармалла мар юрри-сăвви, хӳхĕм тĕррисем…(7)Мĕн тери пахан курăннă вĕсем! (8)Чăвашсемшĕн кӳлĕ хĕрринчи хăмăшĕ те, шурлăхри хăяхĕ те пурçăннăн туйăннă, çемçе те ачаш пулнă. (9)Вĕсем хăйсен çĕрĕ çинче ӳсекен курăка чи ешĕлли тесе шутланă, хăйсен çийĕнчи тӳпене чи сенкерри тенĕ, хĕвел вĕсемшĕн чи сарри пулнă. Атăлĕнчен анлă, тарăн, аслă шыв вĕсемшĕн тĕнчере урăх пулман…*

*(10)Тĕнчере тăван кĕтесрен, тăван çĕртен, тăван халăхран хакли нимĕн те çук.*

1. Текстра профессие палăртакан сăмаха тупăр, вырăсла куçарăр.
2. Текстра ӳсен-тăран ячĕсене тупăр, вырăсла куçарăр.
3. Мĕн вăл гидроним? Текстра гидроним тупăр. Тепĕр чăвашла 6 гидроним çырăр.
4. Текстра пулас причасти тупăр та унăн кашни пĕлтерĕшлĕ пайне (тымарне, аффикссене) палăртса тухăр.
5. Текстран хутлă предложение(сене) çырса илĕр, тĕсне палăртăр, тĕп членĕсене аялтан туртса паллă тăвăр.
6. Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр.

*Ан шарла, аш парăп; чăп , ....*
*Ĕмĕр иртттерессi ....*
*Пуçĕ пулсан ....*
*Çамрăкла вĕренни – чул çинче, ....*
*Ватă патĕнче ватă пул, ....*

7. Тупмалли юмахсен тупсăмĕсене тупăр.

*Пӳртре пукане ташлать.*
*Алă кушак пĕр пӳртпре выртаççĕ.*
*Урасăр утать, аласăр шаккать.*
*Улпут урапин турти каялла.*
*Виç кĕтеслĕ пӳртĕм пур, тухса кĕме шăтăк çук.*

8.Мĕн вăл аллегори?

9. Çак йĕркесем хăш хайлавран? Авторне палăртăр.

*Атте-анне ялан ăсра пурнайтăр,*
*Асли ан пултăр çăкăр-тăвартан.*
*Аки-сухи пирте алран ан кайтăр,*
*Ан уйрăлтăр тус-йыш çĕртен-шывран.*

10. Вуланă текстра палăртнă *«Тĕнчере тăван кĕтесрен, тăван çĕртен, тăван халăхран хакли нимĕн те çук»* шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар ăслав хайлавĕ çырăр.

© 2025 Республиканский олимпиадный центр МОиН РТ
Копирование **не допускается**

РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОЛИМПИАДНЫЙ ЦЕНТР 2025 ВСОШ РОШ МУНИЦИПАЛЬНЫЙ ЭТАП РЕСПУБЛИКАНСКИЙ ОЛИМПИАДН



***Задания** для муниципального этапа республиканской предметной олимпиады школьников по чувашскому языку и литературе.*
*2025/2026 учебный год. 11 класс*

*Время проведения – 180 минут*
*Максимальный балл – 50*

Текста вулăр та ĕçсене тăвăр.

*(1)Хумсем пĕр-пĕрне хăваласа çитес пекех васкаççĕ анчах çитеймеççĕ тытаймаççĕ пĕр-пĕрне çырана перĕнсен çеç пĕрлешсе çухалаççĕ. (2)Хумсен вăйĕ пурпĕрех чакмасть. (3)Çыран еннелле çине-çинех ярать вĕсене аслă Атăл. (4)Таван Атăл… (5)Вăл хăш чух шăпланать те çывăрнă пекех туйăнать. (6)Куç умĕнчех вăранать те чăвашла пăшăлтатса калаçма тытăнать…*

*(7)Шыв çеç хумханмасть кунта, Атăл хумĕ чĕрене те хумхатать. (8)Ун шавĕнче – вырăс юрри, çармăс çемми, тутар кĕвви, калмăк ĕнерĕвĕ… (9)Атăл кĕрлевĕнче лаштра юманăн çил-тăвăлти çĕнтерӳллĕ сасси те.*

*(10)Тăван халăхĕн улăпла Атăлĕ! (11)Кирек ăçта кайсан та асăмран тухма пĕлместĕн эсĕ.*

1. Текстра халăх ячĕсене тупăр та вырăсла куçарăр.Халăх ячĕсене чĕлхе наукинче мĕн теççĕ?

2. Текстра тĕл пулакан халăхсен чĕлхинче Атăл юхан шыв ячĕ мĕнлерех янăрать-ши?

3. Текстра евĕрлев сăмахĕсенчен пулăннă япала ятне, сăмахăн кашни пĕлтерĕшлĕ пайне, сăмах тĕпне палăртăр.

4. 1-мĕш предложение чарăну паллисене тĕрĕс лартса çырса илĕр, мĕншĕн апла лартнине ăнлантарăр.

5. Текстран хутлă предложение(сене) çырса илĕр, хутлă пулнине предложенин тĕп членĕсене палăртса ĕнентерĕр, предложени тĕсне палăртăр.

6. Ваттисен сăмахĕсене вĕçлĕр.
*Нумай пĕтĕ, сахал çитĕ, ....*
*Ятлă çынна ....*
*Халăх хушшинче упа та ....*
*Ыр лашана пĕр пушă, ....*
*Ыр ут хыççăн ....*

8. Тупмалли юмахсен тупсăмĕсене тупăр.
Кĕмĕл кӳме тăрринче тăхлан тăрна.
Явман кантра, çимен утă.
Пĕлĕт çинче илемлĕ хĕр çӳрет.
Ут утланса пӳрте кĕрет.
Вăрăм инке шыва каять.

8. Мĕн вăл палиндром? Палиндром çырса мĕнле чăваш поэчĕ тĕнчипех чапа тухрĕ?

9. Çак йĕркесем авторĕ кам? Нумай пăнчă вырăнне мĕнле сăмахсем çырмалла?
*Пуриншĕн те çак пурăнăç – телей,*
*Пурин те пĕр асаплă шухăш пур-тăр:*
*Çунсан та – çунтăр тӳпере хĕвел,*
*Çусан та – пуля мар – ăш çумăр çутăр.*

10. Вуланă текстра палăртнă *«Тăван халăхĕн улăпла Атăлĕ! Кирек ăçта кайсан та асăмран тухма пĕлместĕн эсĕ»* шухăша уçса парса калăпăшĕпе пысăках мар ăслав хайлавĕ çырăр.



© 2025 Республиканский олимпиадный центр МОиН РТ
Копирование **не допускается**